22-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 26 ШАМАТКУН 293(6233) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

„1942-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1943 çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшри задачăсем çинчен" Чарыков юлташ тунă доклад тăрăх ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

Сталин юлташ фронтта çĕршыва продовольстви тата промышленноçа чĕртавар ытларах та ытларах парса тăма чĕнни çине ответлесе, колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерес тесе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, вĕсем хăйсен уйхирĕсенче питех те пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, Чăваш республикинчи колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене иртнĕ çулхисенчен лайăхрах та организованнăрах туса ирттерчĕç. 1942 çулта çурхи тата кĕрхи культурăсем акнă çĕр лаптăкĕ 35 пин гектар чухлĕ ӳснĕ, çуракине пĕлтĕрхинчен 15 кун малтан туса пĕтернĕ, тырра пĕлтĕрхинчен 20 кун малтан вырса пуçтарса кĕртнĕ. Çакна пула тĕштырăсене, пахча-çимĕçсене, выльăх апачлăх акнă культурăсене тата техникăллă культурăсене нумай туса илнĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар, Калинино, Вăрмар, Элĕк тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем пуринчен те ăнăçлăрах туса ирттерчĕç. Елчĕк, Шăхасан, Вăрнар, Элĕк, Ишлей, Канаш, Йĕпреç, Комсомольски, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай тата Тăвай МТС-ĕсем трактор ĕçĕсен планне пĕтĕмпех тултарчĕç. МТС машинисемпе иртнĕ çулхисенчен нумай лайăхрах усă курчĕç, 15 вăйлă тракторпа вăтамран 70 гектар ытларах ĕçлерĕç, тырра комбайнпа вырса пуçтармалли плана 128 процент чухлĕ тултарчĕç.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Колхозсемпе совхозсенче çамрăк выльăха сыхласа ӳсермелли тата выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пырса, республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕхе ӳстермелли государство планне ăнăçлăн пурнăçларĕç, мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепне 44 процент, сыснасен хисепне 36 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 77 процент ӳстерчĕç.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ куçпа пĕрлех çакна та палăртать: Елчĕк, Комсомольски, Чкаловски, Пăрачкав тата Октябрьски районсем авăн çапас тата кӳрĕк вăрлăхĕсене çапса илес ĕçсене ытла та вăраха ячĕç, вĕсен авăна хăллехи условисенче çапмалла пулса тăчĕ, çакна пула вара тырă нумай тăкаланать. Республикăра тырă хатĕрлес ĕç начар пырать. Государствăна тырă парас ĕçре Первомайски, Пăрачкав, Елчĕк, Кувакино тата Чкаловски районсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ.

Етĕрне, Çĕрпӳ, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Первомайски, Сĕнтĕр тата Шупашкар МТС-ĕсем начар ĕçлерĕç, çакна пула трактор ĕçĕсен планне республика 89,5 процент çеç тултарчĕ.

ВКП(б) Обкомĕ темиçе хут та асăрхаттарнă пулин те ВКП(б) Куславкка, Кувакино, Йĕпреç, Пăрачкав тата ытти хăшпĕр райкомĕсемпе райисполкомсем выльăха пĕтĕмпех сыхласа хăварас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнсан. Колхозсен фермисене валли выльăх çителĕклĕ илсе хуман, çавăнпа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пурнăçа кĕртмен.

Республикăри МТС-семпе совхозсенче тата колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç майĕпен сарăлса пырать. Тракторсене тăваттăмĕш кварталта юсамалли плана 1942 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 58,2 процент çеç тултарнă; Улатăр, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕсем вара тракторсене юсамалли плана 25 процентран та кая тултарнă. Нумай колхозсенче ялхуçалăх инвентарьне юсама тытăнман. Тĕштырă, çĕрулми, йĕтĕн тата кантăр вăрлăхĕсене хывмалли плана тултарман. Нумай колхозсенче вăрлăхсене тасатас тата вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕçе халиччен те организацилемен.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

1. ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене, колхозсен правленийĕсене январĕн пĕрремĕшĕччен авăн çапса пĕтерме тата 1943 çулхи январĕн 15-мĕшĕччен вăрлăхлăх кӳрĕксене çапса пуçтарма хушас.

2. Парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсене 1943 çулти январĕн 1-мĕшĕччен кая юлмасăр — тырпул хатĕрлевĕн планне тата çĕрулми, пахча-çимĕç тăратмалли плана, январĕн 15-мĕшĕччен кая юлмасăр — государствăна йĕтĕн сӳсĕ тата махорка тăратмалли плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме хушас.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ: чылай районсенче государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçласси нчен пăрăнакан çынсене, государство умĕнче парăмлă çынсене ку тарихчченех айăплăмасăр пурăннине пăчах та чăтса тăма çук, тесе шутлать; ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, Хатĕрлев наркоматĕн уполномоченнăйĕсене çакнашкал практикăна сирес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма, мĕнпур парăмсене шыраса илме тата единоличниксемпе колхозниксен, рабочисемпе служащисен мĕнпур хуçалăхĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пурнăçа кĕртмелле тума хушать.

3. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана район тăрăх çеç мар, кашни колхоз тăрăх уйрăмшарăн тултарассине пурнăçа кĕртме хушас. Выльăха, уйрăмах колхозсенчи çамрăк выльăхсене, мĕнле сыхласа ӳсернине хытă контрольлесе тăмалла. Выльăх вилнин сăлтавĕсене кашни хутрах тимлĕн тĕпчесе тĕрĕслемелле, айăплисене çирĕп ответ тыттармалла. Выльăхсене пăхса усрассине тĕпренех лайăхлатмалла, ку ĕçри ответсăрлăха пĕтермелле, пур фермăсенче те ĕç тăрăх тӳлессине пурнăçа кĕртмелле.

4. Наркомзема, ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене колхозсен правленийĕсене тракторсемпе ялхуçалăх машинисене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн Бюровĕ палăртнă срокĕсенче, пысăк пахалăхпа юсаса çитерме хушас.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, политотделсен начальникĕсене, çавăн пекех промышленность предприятийĕсен руководителĕсене çакна асра тытма хушать: тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра ăнăçлăн юсасси запаслă чăçсене МТС-сен мастерскойĕсенчех, республикăри промышленность предприятийĕсенчех тата колхозсен тимĕрçĕ лаççийĕсенчех çĕнĕрен тунинчен тата юсанинчен, пур пек запаслă пайсене, материалсемпе топливăна расходланă чухне çирĕппĕн перекетленинчен тата парторганизацисем, МТС-семпе совхозсен политотделĕсем халăх хуçалăхĕнчи çак питех те кирлĕ задачăна пурнăçлама рабочисене, инженерла-техникла работникĕсене тата колхозниксене мобилизацилеме пултарнинчен килет.

5. Канашри вагонсем юсакан, Улатăрти паровозсем юсакан заводсен, Улатăрти чугунçул техникумĕн, Вăрман Халăх Комиссариачĕн Центрально-ремонтнăй мастерскойĕсен, Н-ски заводсен, Çĕрпӳри авторемонтнăй мастерскойăн директорĕсемпе пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене тата Чăвашпромсоюзĕн председательне тракторсемпе ялхуçалăх машинисен пайĕсене хатĕрлеме тытăнма тата вĕсене ку тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çирĕплетсе панă плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçлама хушас.

6. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомне тракторсен пĕр пайне тата нефтедвигательсене газогенераторлă топливо çине куçармалли мероприятисене палăртса хатĕрлеме хушас.

Наркомзема, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, райисполкомсене 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр газогенераторлă топливăн çулталăкри запасне хатĕрлесе çитерме хушас.

7. Çураки валли вăрлăх хывас тата вăрлăха сортласа хатĕрлес ĕçсем питех те çителĕксĕр пулса иртнине палăртса, ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райисполкомсен председателĕсене, МТС-семпе совхозсен политотделĕсен начальникĕсене, çĕрĕç органĕсен руководителĕсене çапла асăрхаттарать: ку ĕç çине çакнашкал тимсĕрле пăхни кăçал каллех иртнĕ çулхи йăнăшсене тепĕр хут тăвасси патне илсе пыма пултарать. Пĕлтĕр хăшпĕр колхозсем, вăрлăх хывас тата ăна сортласа хатĕрлес ĕç çине çителĕксĕр кавăрăнса пăхнă пирки, вăрлăхсемсĕр тăрса юлчĕç е начар пахалăхлă вăрлăха акса хăварчĕç, çакă вара çав колхозсенче çуртырисем сайра шăтасси патне, çуртырри калчисем çĕресси патне илсе пычĕ, вĕсене тепĕр хут акни те пулчĕ. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти райкомĕсене, райисполкомсене, çĕрĕç органĕсене, ялсовет исполкомĕсемпе колхозсен правленийĕсене сурепи валли вăрлăха сортласа хатĕрлессине вăйлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăннă, çапла вара вăрлăх хывас пĕтĕм ĕçе 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, вăрлăх сортлас тата унăн пахалăхне лабораторисенче тĕрĕслес ĕçе январĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлеме хушать.

1943 çулта хирпăрхăйне валли пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсене туса илес тесе, пур колхозсемпе совхозсенче те 1942 çулта пуххса илнĕ икĕ çул ӳсекен культурăсен тымарĕсене вăрлăх тума хумалла, вăрлăхлăх лартма хатĕрленĕ тымарсен хисепĕ Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановленире кăтартнă чухлĕ пулмалла.

8. Çакна палла тăвас: кăçал нумай районсем агротехника мероприятийĕсен планне, уйрăмах вырăнти удобренисем хатĕрлес тата турттарса тухас, юр тытас, калчасене апат парас плана пурнăçа кĕртеймерĕç. ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсемпе çĕрĕç органĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, политотдел начальникĕсене, колхозсен правленийĕсене тислĕк, торф, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл, çавăн пекех тата минераллă удобренисем хатĕрлесе турттарса тухмалли плана пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле тума хушас. Çакна май январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вырăнти тата минераллă удобренисене турттарса тухма лашасен 20 процентĕнчен кая мар уйăрмалла, çак ĕçре мăйракаллă шултăра выльăхсемпе те анлăн усă курмалла. 1943 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 1-мĕшне çити вăхăтра вырăнти удобренисене хатĕрлес тата турттарса тухас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттерес.

9. ВКП(б) райкомĕсем, райисполкомсем, çĕрĕç органĕсем лашасене ĕрчетсе вĕсен хисепне ӳстерес ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхманнине, лашасене мĕнле пăхса усранине тата вĕсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăманнине ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ пăчах та тивĕçсĕр япала тесе шутлать. Çак çитменлĕхе пула нумай колхозсенче лашасене пăхса усрас тĕлĕшре обезличка пур, лашасене начарлатса ярса, хĕнесе пĕтерсе строя кăларнă тĕслĕхсем нумай, çавăн пекех тата лашасем, уйрăмăнах тихасем вилни пулкалать.

Туртăм вăйне çураки валли вăхăтра хатĕрлени питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине асра тытса, ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, çĕрĕç органĕсене, колхозсен правленийĕсене тата совхозсен директорĕсене çӳлте асăннă обезличкăна пĕтерме, лашасене мĕнле пăхса усранине, тăрантарнине тата вĕсемпе усă курнине кулленех тĕрĕслесе тăма, халĕ пур лашасене пурне те сыхласа хăварма çеç мар, тата вĕсен хисепне малалла та ӳстерсе пыма хушать.

Продукци сахал паракан мăйракаллă шултăра выльăхсене пурне те хирте тата кирек-мĕн турттарнă çĕрте ĕçлеме хĕл вăхăтĕнче вĕрентсе хатĕрлемелле.

10. Наркомзем, райисполкомсем тата ВКП(б) райкомĕсем колхоз транспорчĕ çине çавăрăнса пăхма пăрахнине пачах тивĕçсĕр япала тесе шутлас. Колхозсенче транспорт хатĕрĕсене тата ут таврашĕсене юсас тата туса хатĕрлес ĕçе организацилемен. Наркомлес, Наркомместпром тата промкооперации предприятийĕсем колхозсене сутма транспорт хатĕрĕсем туса кăларас плана пĕрмаях пурнăçа кĕртеймеççĕ. Еç çине çакăн пек тӳсме çук сӳрĕккĕн пăхнине пула хăшпĕр колхозсенче чылай лашасем валли урапасем, çунасем тата ут таврашĕсем çук, çавăнпа та вĕсемпе ялхуçалăх ĕçĕсенче туллин усă курма пултараймаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Наркомзема, райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, совхозсен директорĕсене тата колхозсен правленийĕсене урапасем, çунасем тата ут таврашĕсем туса хатĕрлес, вĕсене юсас ĕçе организацилеме хушать.

Чăваш АССР Совнаркомне тата ВКП(б) Обкомĕн бюроне Наркомлесăн, вырăнти промышленноçăн, промкооперации предприятийĕсенче тата колхозсенче транспорт хатĕрĕсем туса кăларассине колхозсен ыйтăвне пĕтĕмпех тивĕçтермелле туса ӳстерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

11. ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене колхозсенче тупăшсемпе тырпула валеçес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăма хушас. Колхозниксене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх ĕçшĕн хушса тӳлессине пурнăçа кĕртес шутпа, ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илнине тата бригадăсемпе звеносем тырпул мĕн чухлĕ туса илнине тĕрĕслессине халех организацилемелле. Январь уйăхĕнче пур колхозсенче те колхозниксен аслă пухăвĕсене ирттермелле, вĕсенче ялхуçалăх çулĕн итогĕсем çинчен колхоз правленисен отчечĕсене итлемелле, ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене уçса палăртас тата колхозсен обществăллă хуçалăхне малалла аталантарса пырас тĕлĕшпе конкретлă плансем йышăнмалла.

12. Республикăри колхозсенче ĕçе звеносем тăрăх организацилесси начар пурнăçа кĕнине палăртса, ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Наркомзема, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-сен политотделĕсемпе колхозсен правленийĕсене лайăх ĕçлекен звеносен ĕçри опытне анлăн сарнă никĕс çинче мĕнпур колхозсенче ĕçе звеносем тăрăх организацилессине пурнăçлама хушас, уйрăмах звеносем çумне техникăллă культурăсен калчисене — кантăр, йĕтĕн, махорка, кок-сагыз, сахăр кăшманĕ тата çĕрулми культурисене çирĕплетсе парасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма хушас. Колхозсене звеносенче кашни ĕçшĕн уйрăм тӳлессине, çавăн пекех звеносен кашни членĕ çумне ĕç вăйĕ нумай ыйтакан культурăсене (кок-сагыз, махорка, сахăр кăшманĕ) çирĕплетсе памашкăн сĕнӳ парас. Январь уйăхĕнче звеносем çумне культурăсем тата çĕр участокĕсем çирĕплетсе парас ĕçсене туса ирттермелле, кашни звенона мĕн чухлĕ тырпул туса илмелли çинчен çирĕп задачăсем памалла. Çак никĕс çинче мĕнпур звеносене çуракине хатĕрленес тата хĕллехи агротехникăллă мероприятисене туса ирттерес ĕçе активлăн хутшăнтармалла.

ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен политотделĕсене звеньевойсем хатĕрлес тĕлĕшпе 3—5 кунлă семинарсем ирттерме, çавăн пекех колхозниксене агротехникăна вĕрентессине анлăн сарса яма хушас.

13. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Наркомзема, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен политотдел начальникĕсене тата директорĕсене механизаторла кадрсем тата колхоз кадрĕсем хатĕрлесси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхма, çавна май тракторристсем, комбайнерсем, трактор отрячĕсен бригадирĕсемпе механикĕсем хатĕрлекен шкулсемпе курссене пухса çитерме хушать. Вĕренӳ пахалăхне тĕпренех лайăхлатмалла, курссенчен вĕренсе тухнă трактористсемпе комбайнерсем çак машинăсене лайăх пĕлччĕр тата хăйсемех вĕсен ĕçĕнчи чăрмавсене, техникăллă çитменлĕхсене пĕтерме пултарччăр. Хĕл вăхăтĕнче колхозсен председателĕсене 10—15 кунлă, колхозсен бригадирĕсене 5—7 кунлă курссенче вĕрентсе хатĕрлес.

14. Наркомзема, ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, çавăн пекех тата хула совечĕсемпе ВКП(б) горкомĕсене 1943 çулти февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕнĕ парниксемпе теплицăсене тăвас тата киввисене юсаса çĕнетес ĕçсене вĕçлеме, парниксемпе теплицăсенче пахча-çимĕçе вăхăтра акса хăварма кирлĕ вăрлăхпа тислĕке çителĕклĕ таран хатĕрлесе çитерме хушас.

15. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсене, районсемпе хула совечĕсен исполком председателĕсене, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене подсобнăй хуçалăхпа харпăрхăйĕн пахчисем рабочисемпе служащисене пахча-çимĕç парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушать тата подсобнăй хуçалăхпа ĕççынисен харпăрхăйĕн пахчийĕсене малалла сарса пыма, вĕсене çуракине вăхăтра хатĕрлеме хушать.

16. Çуракине хатĕрленес задачăсем парти организацийĕсене пурне те колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе татăклăнах вăйлатма тата колхозсене куллен ертсе пыма хушаççĕ.

Пленум ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен политотдел начальникĕсене колхозăн хуçалăхлă ĕçĕсенче колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ответлăхне ӳстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушать. Çапла тумалла: кашни пуçламăш парторганизаци колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пытăр, производство планĕсене пурнăçлама пулăштăр.

17. ВКП(б) райкомĕсемпе МТС-сен политотделĕсене ялсенчи комсомол организацийĕсене çирĕплетес тата колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе туса пырас ĕçре, колхозсен хуçалăхла ĕçĕсенче комсомолецсен вырăнне ӳстерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас. Пленум ВЛКСМ Обкомне тата ВКП(б) райкомĕсене колхоз çамрăкĕсене ВЛКСМ ретне илес ĕçе тĕпрен вăйлатма хушать, çапла туни çывăх вăхăтрах кашни колхозра комсомолăн пуçламăш организацине тума майсем туса патăр.

18. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене январĕн 15-мĕшпе 31-мĕшĕ хушшинче партипе совет тата колхоз активĕн районсенчи канашлăвĕсене ирттерме хушас, вĕсенче колхозсен, МТС-сен тата совхозсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене сӳтсе-явас, 1943 çулшăн çĕнĕ обязательствăсем илес. Вăл канашлусене ирттерес умĕн колхозсем, МТС-семпе совхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе организацилес.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене авăн çапас тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме чĕнет. Çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн, Тăван çĕршывпа фронт валли продовольстви, промышленность валли чĕртавар ытларах парса тăрас тесе ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне малалла ӳстерсе пырассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, çапла вара фашистла захватчиксене хăвăртрах аркатса тăкма пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшмалла.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă заводсен рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награтăласси çинчен

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тунă çитĕнӳсемшĕн, Чăваш АССР-ĕнчи промышленность предприятийĕсен уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе награтăлас:

1. Завод директорĕн помощникне Моисей Ефимович **Антонова.**
2. Цех мастерне Иван Иванович **Аверина.**
3. Слесарь-монтажника Димитрий Андреевич **Андреева.**
4. Рабочие Константин Григорьевич **Берехастова.**
5. Рабочие Пэтр Степанович **Бадаева.**
6. Смена мастерне Мария Ивановна **Баштана.**
7. Заводăн главнăй технологне Наталья Андреевна **Бильдюкевича.**
8. Цех начальникне Павел Макарович **Бессалыя.**
9. Мастера Людмила Лукинична **Быковăна.**
10. Цех начальникĕн заместительне Израил Григорьевич **Бродские.**
11. Участок бригадирне Кива Нахимович **Береговоя.**
12. Станочницăна Антонина Яковлевна **Беловăна.**
13. Ĕçпе кадрсен отделĕн начальникне Виктор Иванович **Бороха.**
14. Старши десятнике Николай Яковлевич **Вазима.**
15. Строительство столярне Алексей Григорьевич **Виноградова.**
16. Работницăна Анна Александровна **Вурмавшинăна.**
17. Старши нормировщика Виктор Антонович **Выраст?йнина.**
18. Столяра Карл Юганович **Ваареса.**
19. Работницăна Мария Гурьевна **Гурьевăна.**
20. Контролера Наталия Борисовна **Гуринăна.**
21. Маляра Мария Якимовна **Голеватюка.**
22. Заводăн главнăй механикне Матвей Михайлович **Гуревича.**
23. Мастера Ефросиния Петровна **Дроздовăна.**
24. Работницăна Елена Матвеевна **Дудинăна.**
25. Цех начальникĕн заместительне Анна Александровна **Давыдовăна.**
26. Старши мастера-электрика Петр Илларионович **Дальнова.**
27. Цех начальникне Сергей Николаевич **Дружинина.**
28. Слесаре Алексей Яковлевич **Дарешина.**
29. Слесаре Федор Степанович **Довгале.**
30. Сулйĕр бригадирне Евдоким Александрович **Енцова.**
31. Контролера Семен Алексеевич **Енцова.**
32. Работницăна Ульяна Ефимовна **Ефимовăна.**
33. Плотнике Иван Терентьевич **Ермолаева.**
34. Слесарь-сборщика Екатерина Иосифовна **Ефремовăна.**
35. Бригадира Дмитрий Савельевич **Живулина.**
36. Главнăй механикăн тата инструментальнăй отдел начальникĕн ĕçĕсене тăваканне Михаил Николаевич **Жандарова.**
37. Мастера Александр Алексеевич **Знахуренкона.**
38. Штамповщицăна Юлия Захаровна **Захаровăна.**
39. Мастера Матвей Ефимович **Злочевские.**
40. Механически цехăн начальникне Вениамин Иосифович **Златопольские.**
41. Работницăна Нина Ивановна **Ивановăна.**
42. Прессовщицăна Александра Ильинична **Ильинăна.**
43. Завод директорне Иван Петрович **Канатова.**
44. Штамповщика Константин Мирснович **Косоченкона.**
45. Столяра Мария Николаевна **Крысуновăна.**
46. Столяра Николай Куприянович **Куприянова.**
47. Формировщицăна Улита Ивановна **Кураковăна.**
48. Мастера Василий Федорович **Красовские.**
49. Слесаре Виктор Николаевич **Колесникова.**
50. Оклейщицăна Екатерина Павловна **Комаровăна.**
51. Молотобоеца Алексей Александрович **Кедрова.**
52. Цех начальникне Александр Львович **Кинзбургские.**
53. Слесаре Александр Карпович **Киреева.**
54. Слесарь-сборщика Мария Зиновьевна **Кривошеевăна.**
55. Слесарь-сборщика Клавдия Павловна **Красновăна.**
56. Снабжени отделĕн группин руководительне Спиридон Иванович **Лисина.**
57. Работницăна Федосия Михайловна **Любимовăна.**
58. Мастер помощникне Мария Терентьевна **Левановăна.**
59. Комбинатăн главнăй конструкторне Борис Константинович **Ландышева.**
60. Станочницăна Нина Дмитриевна **Лебедевăна.**
61. Гараж начальникне Василий Владимирович **Лещевские.**
62. Токаре Василий Оскарович **Лютермозера.**
63. Работницăна Галина Михайловна **Михайловăна.**
64. Рабочи столяра Федор Матвеевич **Матвеева.**
65. Работницăна Елизавета Яковлевна **Музяковăна.**
66. Шофера Иван Васильевич **Морозкина.**
67. Работницăна Ольга Григорьевна **Морозовăна.**
68. Мастера Тамара Леонтьевна **Мурышкинăна.**
69. Механика Александр Федорович **Мелашенкона.**
70. Столяра Ян Янович **Микельсонса.**
71. Контролера Александр Яковлевич **Мельника.**
72. Столяра Анна Никифоровна **Медниковăна.**
73. Тимĕрçе Иван Димитриевич **Максимова.**
74. Слесаре Евгений Григорьевич **Мищенкона.**
75. Работницăна Анфиса Дмитриевна **Никифоровăна.**
76. Бригадира Евдокия Николаевна **Николаевăна.**

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă заводсен рабочийĕсене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работникĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

77. Электромонтера Вячеслав Николаевич Николаева.
78. Маляра Хамид Гимаевич Нуриязова.
79. Заводăн главнăй технологне Вульф Еселевич Недорезова.
80. Токаре Алексей Лаврентьевич Оринкона.
81. Слесаре Николай Иванович Офицерова.
82. Работницăна Акулина Васильевна Пахалинăна.
83. ЦК ВКП(б) парторгне Дмитрий Никитич Полунарова.
84. Хурал начальникĕн помощникне Парасковья Николаевна Панинăна.
85. Цех начальникне Иван Степанович Пушкина.
86. Цех начальникне Леонид Моисеевич Просяка.
87. Цех начальникне Борис Афанасьевич Петрова.
88. ЦК ВКП(б) парторгне Николай Алексеевич Петрученкона.
89. Работницăна Мария Николаевна Романовскăна.
90. Комбинатăн производство начальникне Лазарь Маркович Роднянскне.
91. Сварщика Ошер Исаакович Розина.
92. Токаре Георгий Дмитриевич Редькина.
93. Токаре Николай Павлович Рогачева.
94. Работницăна Анна Семеновна Семеновăна.
95. Рабочие Василий Семенович Семенова.
96. Контролера Дарья Александровна Соловьевăна.
97. Мастерской начальникне Тимок Васильевич Суркова.
98. Столяра Аверкий Александрович Семенова.
99. Мастера Раиса Семеновна Сазинăна.
100. Цех начальникне Николай Александрович Симонова.
101. Цех начальникне Павел Евграфович Семенова.
102. Слесарь-инструментальщика Николай Евграфович Семенова.
103. Монтажницăна Евдокия Никитична Стреленнаяна.
104. Федор Григорьевич Сенькова.
105. Слесаре Ефрем Абрамович Сухоя.
106. ВЛКСМ Комитечĕн секретарьне Евдокия Кузьминична Трусовăна.
107. Работницăна Александра Титовна Титовăна.
108. Арматурщика Степан Андреевич Тарасенкона.
109. Маляра Иван Константинович Трубачева.
110. Цех начальникне Олег Вячеславович Троицкие.
111. Завод директорĕн заместительне Виталий Иульянович Уральские.
112. Рабочие Иван Федорович Федорова.
113. Работницăна Елена Федоровна Федоровăна.
114. Цех мастерне Иван Семенович Францува.
115. Цех диспетчерне Надежда Яковлевна [illegible].
116. Бригадира Павел Иванович Царапкина.
117. Слесарь-сборщика Вера Ивановна Хреновăна.
118. Цехăн старши мастерне Семен Афанасьевич Цигичкона.
119. Работницăна Валентина Григорьевна Черновăна.
120. ОРС бригадирне Евдокия Леонтьевна Черноцовăна.
121. Слесарь-сборщика Мария Григорьевна Чеботаевăна.
122. Слесарь-заготовщика Мария Сергеевна Чирковăна.
123. Работницăна Феодосия Васильевна Шевцовăна.
124. Профсоюз завкомĕн председательне Лидия Афанасьевна Шунниковăна.
125. Цехăн старши мастерне Николай Александрович Шутова.
126. ОРС плотникне Осип Павлович Шапилова.
127. Завод директорне Михаил Иванович Шелухина.
128. Работницăна Татьяна Яковлевна Яковлевăна.
129. Котельщика Фома Александрович Ягодина.
130. Производство начальникĕн заместительне Алексей Иванович Якунина.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çар валли хамăрăн вăйпа танксемпе самолетсем тăвар!

Республикăри ĕççынниксем танксен колоннисене тума 31.552.000 тенкĕ хывнă

Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государство банкне республикăри ĕççыннисенчен танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума пĕтĕмпе 31.552.000 тенкĕ укçа пырса кĕнĕ. Малта УЛАТĂР, ВĂРНАР, ШУПАШКАР, КАЛИНИНО, СĔНТĔРВĂРРИ, ЧКАЛОВСКИ районĕсем. Вĕсем çак ĕç валли 2.500.000—2.000.000-шер тенкĕ пухнă. Юлашки вăхăтра ку ĕç ПĂРАЧКАВ, СĔНТĔРВĂРРИ, ÇĔРПУ, ÇĔМĔРЛЕ, ЕТĔРНЕ районĕсенче те вăйланни сисĕнет. Анчах Шăмăршă, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Шăхасан, Йĕпреç районĕсенче ку ĕç халĕ те кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пымасть-ха.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас тĕлĕшпе ШУПАШКАР МТС-ĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать. Унти трактористсемпе комбайнерсем тата рабочисемпе служащисем çак ĕç валли 168.000 тенкĕ пухнă. Ун хыççăн КУВАКИНО, ИШЛЕЙ, ЕЛЧĔК МТС-ĕсем пыраççĕ. Анчах танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухассине Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Шăмăршă, Куславкка, Улатăр МТС-ĕсенче çаплах хăвăртлатман-ха.

Патриотизмăн паха примерĕ

УЛАТĂР. Паянхи кун тĕлне районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пĕтĕмпе 2.550.000 тенкĕ укçа хывнă. «Путь Ильича» колхоз членĕсем çак ĕç валли хăйсемех пĕр миллион тенкĕ пухнă. Рядовой колхозник Степан Яковлевич Митин юлташ (унăн ывăлĕпе хĕрĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче) танксен колоннине тума 60.000 тенкĕ хывнă. Çавăн пекех «Прогресс» колхоз членĕ Иван Степанович Фомин юлташ та 18.000 тенкĕ хывнă.

Ферапонт Петрович Головатыйăн Сталин юлташ мухтавне тивĕç пулнă ĕçĕ «Красный луч» колхоз членне, 58 çулти Андрей Михайлович Сарсков юлташа хытă хумхантарнă. Вăл та, Ферапонт Головатый пекех, колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе, пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма пуçланă. Вăл фронта хăйĕн юратнă икĕ ывăлне ăсатнă. Хăй колхоз бригадирĕ пулса ĕçleme тытăннă. Сталин юлташăн доклачĕпе тата историллĕ приказĕпе хавхаланса, вăл 100.000 тенкĕ укçа хывса, вăл укçана пирĕн мухтавлă земляк—Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов юлташ валли беовой самолет тунă çĕре пама ыйтнă.

ÇĔРШЕР ПИН ТЕНКĔ ХЫВАÇÇĔ

ЧКАЛОВСКОЕ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне районри колхозниксемпе колхозницăсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.700.000 тенкĕ укçа пухса банка хывнă. Сталин ячĕпе тăракан, Чкалов ячĕпе тăракан, «Красное знамя», «Çăлтăр», «Маяк» тата ытти хăшпĕр колхозсем çак ĕç валли çĕршер пин тенкĕ хывреç. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç вăйлансах пырать.

А. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхозлă ял фронта пулăшать

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 140.000 тенкĕ пухрĕç. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 70.000 тенкĕ, Яндашри вăтам шкулта вĕренекенсем 760 тенкĕ пухса укçине банка хыврĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

ТĂВАЙ. (Телефонпа). Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районĕпе 1.000.000 тенкĕ ытла пухнă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 50.000 тенкĕ панă, колхоз председателĕ—отечественнăй вăрçăн инваличĕ Д. Григорьев 1.000 тенкĕ панă, Элпуçĕнчи «КИМ» колхозăн председателĕ Воробьев 2.500 тенкĕ хывнă. Танксен колоннине тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

В. ИЛЬИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем малалла ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан вуншар пункта, çав шутра **Михайлово-Александровский, Колодези, Маньково-Березово, Селивановка** ятлă пысăк пунктсене, **Скосырская** тата **Милютинская** ятлă район центрĕсене тата **Чайкин, Шептухова** ятлă пысăк чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Çак кунсенче пирĕн войскăсем Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра наступлени тума пуçланă, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, вĕсем халăх пурăнакан пысăк пунктсене —**Дзурикау, Кадгорон, Ардон, Алагир, Ногкау** пункчĕсене йышăнса илнĕ.

Сталинград районĕнче противникăн 6 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

Хура тинĕсре пирĕн карап противникăн подводнăй лодкине путарнă.

* * *

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăсĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем противникăн хирĕç тăмалли вăйлă тĕреклетнĕ узелне кĕрсе кайнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн ăна тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен оборона рубежĕсене тĕреклетнĕ тата разведка тунă. Н-ски чăсăн артиллерисчĕсем противникăн 6 дзотне тата 2 блиндажне ишĕлтернĕ. Минометсемпе персе, нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине, атака тума хатĕрленсе тăнăскере, сапаласа янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Чугунçул районĕнче пирĕн подразделенисем хирĕç пырса çапса гитлеровецсен 2 батальонне аркатса тăкнă, 7 танкне пĕтерсе тăкнă тата чугунçул разъездне тытса илнĕ. Тепĕр участокра противникăн пĕр батальон таран пехотипе 25 танкĕ халăх пурăнакан пĕр пункта темиçе хут та атакăланă. Нимĕçсен пур атакисене те сирсе янă, противника пысăк çухатусем тӳстернĕ. Старши лейтенант Шолохов, старши сержантсем Блохипе Галагаев тата старшина Квашнин ларнă танк пĕр высота çинче засадăра тăнă. Тул çутăласпа нимĕç танкĕсем курăнса кайнă. Пирĕн танкистсем пеме тытăнса тăшманăн 8 танкне персе çĕмĕрнĕ те противникăн атакине сирсе янă.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă, каялла чакакан противника хăваласа пырса, вĕсем ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Уйрăм участоксенче нимĕçсем совет чăсĕсене малалла кайма чарма хăтланса темиçе хут та контратака тунă. Противникăн пур контратакисене те сирсе янă. Н-ски чăсăн боецĕсем нимĕçсен 2 полкне çапса аркатнă, пин салтакпа офицера ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен сапернăй батальонне офицерĕсемпе тата батальон командирĕпе пĕрлех çавăрса илсе пĕтĕмпех тыткăна илнĕ. Волошино ятлă район центрне тытса илнĕ чухне противникăн 3.500 салтакпа офицер таран пĕтнĕ. Пирĕн чăсçем автомашинăсем нумай, боеприпассемпе продовольстви склачĕсене тата тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсене хирĕç наступленилле çапăçусем туса пынă тата хăйсен позицийĕсене хӳтĕлесе тăнă. Великие Луки районĕнче нимĕçсем, пехотăпа танксен çĕнĕ вăйĕсене илсе пырса, темиçе хут та контратака тунă, анчах та ĕçе ăнăçтарайман. Кроник юлташ командир пулса тăракан чăсăн боецĕсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе ярса, вĕсене опорнăй пунктран хĕссе кăларнă, противникăн 150 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра нимĕçсен икĕ полк таран пехоти 50 танк пулăшса пынипе пирĕн Н-ски часть хӳтĕлекен позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем противника каялла сирсе янă. Çапăçура нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинăри партизансен вĕçĕ отрячĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç икĕ уйăх хушши активлăн кĕрешсе, тăшманăн темиçе пин салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăн 39 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, 39 паровоза, 736 вагон, 47 танка, 14 бронемашинăна, пĕр бронепоезда, 32 орудие, 120 автомашинăна, 20 тягача, 27 склада пĕтерсе тăкнă. 8 чугунçул станцине аркатса тăкнă, чугунçул çинчи 29 кĕпере тата шоссе çулĕсемпе грунт çулĕсем çинчи 35 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Пехота хĕçпăшалĕпе персе, совет патриочĕсем нимĕçсен 3 самолетне ӳкернĕ. Партизансем 2 оруди, 59 автомашина, 9 радиостанци тата продовольстви нумай тытса илнĕ, çав продовольствие нимĕçсем хресченсенчен туртса илсе Германие ăсатма хатĕрлесе хунă пулнă.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенчи мирлĕ çынсене [illegible] ыраççĕ. Калинин облаçĕнчи [illegible] ра гитлеровецсем пĕр çурта [illegible] па хĕрарăма тата ачана хăвал[illegible] та вĕсене унта питĕрсе лартнă. Темиçе кунтан нимĕçсем çав çынсене унтан кăларнă та хăйсем валли вилĕ шăтăкĕсем чавма хушнă, унтан вара çав пĕр айăпсăр мирлĕ çынсене персе вĕлернĕ. Чихачево ялĕнче гитлеровецсем 300 çынна персе вĕлернĕ. Радча ялĕнче фашистла бандитсем икĕ ватă учительницăна—Дружевскаяпа Дозинăна çурса-вакласа пĕтернĕ. Новосокольниковăра нимĕçсем 11 хĕрарăма краçинпа сапнă та çунтарса янă.

Декабрĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче, **Центральнăй** фронтра, **Донăн** вăтаçĕрĕнчи районра тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чăсçем противникăн темиçе контратакине сирсе янă, гитлеровецсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Çĕр каçа нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен малтанхи рубежĕсене хӳтĕлесе тăнă тата противникпа пăшалсемпе пулеметсенчен хире-хирĕç персе тăнă. Снайперсем 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Çĕрле совет летчикĕсем нимĕçсен аэродромĕ çине бомбăсем пăрахса вĕсен 5 самолетне çунтарса янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе янă тата хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе наступленилле çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем, пысăк çухатусем тӳссе, каштах малалла куçнă. Анчах пирĕн чăсçем хăйсен вăйĕсене урăхла вырнаçтарса тăратса тата тăшмана хирĕç пырса çапса, ăна каялла чакарнă та хăйсен позицийĕсене çĕнĕрен тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски часть тактика енчен питĕ паха пулса тăракан пĕр высотăна йышăнса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити, 27 танкне, 52 автомашинине, 5 орудине тата 23 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Боец-гвардеецсем противника атакăланă та, унăн оборонине çĕнтерсе, халăх пурăнакан пысăк пункта йышăнса илнĕ, гитлеровецсем çав пункта вăйлăн хӳтĕленĕ пулнă.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем противникăн çапса çĕмĕрнĕ чăсĕсене хăваласа пынă. Пĕр участокра Н-ски чăсăн боецĕсем, флангсенчен пырса çапса, халăх пурăнакан вăйлă тĕреклетнĕ пункта йышăнса илнĕ, нимĕçсен 650 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 19 оруди, 37 пулемет, 51 автомат, 41 автомашина тата продовольствипе боеприпассен склачĕсене тытса илнĕ 215 çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тĕрлĕ çар пурлăхĕ тиенĕ обоза, 3 йывăр орудие, 7 тягача тата 15 автомашинăна тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра Красняков юлташ командир пулса тăракан чăсăн боецĕсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă, нимĕçсен 6 танкне çунтарса янă, 13 танкне персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Çав çапăçура бронебойщик Кудряшов юлташ противотанковăй пăшалтан темиçе хут персе ярса противникăн 2 танкне вут тивертнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин пĕр роти икĕ йывăр танк хӳтĕлесе пынипе пирĕн позицисем патне çывăхарнă. Тарасов лейтенант противотанковăй пăшалпа малтан пĕр танкне, унтан иккĕмĕш танкне те персе çĕмĕрнĕ. Тăшманăн пехотине, хӳтĕлекен танксемсĕр тăрса юлнăскере, вара пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чăсçем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта илнĕ. Нимĕçсен 23 танкне тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем сиенленнĕ 24 танка, 10 грузовика, 12 пулемета, 1.000 минăна ытла тата противникăн снарядсен складне тытса илнĕ.

* * *

Туапсеран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чăсçем, уйрăм отрядсене уйăрса кĕрешсе, нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери противникăн 8 блиндажне пĕтерсе тăкнă тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă. Старши лейтенант Дунайко ертсе пыракан разведчиксен группи противник тăракан вырăна сăвăлланса кĕнĕ те 4 дзота, 7 пулеметнăй точкăна тата 80 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пысăк пунктри нимĕç гарнизонне сасартăк тапăннă. Хаяр çапăçу икĕ талăка яхăн пынă. Гитлеровецсем çав гарнизона пулăшма авиаци янă тата кӳршĕри хуларан васкаса пехотăн пысăк отрядне янă. Çав пункт патне çывăхарса пынă нимĕç салтакĕсене партизансен засадисем тытса чарнă. Совет патриочĕсем нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă, тăшманăн 350 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Партизансем 2 пулемет, 180 винтовка, 26 пистолетпа автомат, 50.000 патрон тата продовольстви складне тытса илнĕ.

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсем Лион хули çывăхĕнче нимĕçсен хĕçпăшалсем турттарса пыракан 2 автомашинине тытса чарнă та вĕсене хуралласа пыракан нимĕç салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ, грузне тытса илнĕ. Парижра урампа иртсе пыракан нимĕç салтакĕсен колонни çине çурт çийĕ çинчен бомбă пăрахнă. Взрыва пула 15 гитлеровец вилнĕ.

Хĕрлĕ ялавлă коллектив

Хусан чугунçулĕн 17-мĕш дистанцийĕн 4-мĕш околоток коллективĕ (руководителĕ Чураков юлташ) ноябрь уйăхĕнче çулйĕр юсамалли плана 150 процент тултарса, пĕрремĕш вырăна тухнă. Çавăншăн коллектива 17-мĕш дистанцин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Коллектив членĕсенчен 45 проценчĕ стахановецсем. Коллективра уйрăмах обходчик А. Афанасьев юлташ лайăх ĕçлет. Вăл хăйĕн дежурстви пĕтнĕ хыççăнах чугунçула ремонтланă çĕре хутшăнать. Нормăна кашни кунах 255 процент тултарать. Çавăн пекех П. Петрова юлташ та хăйĕн кулленхи ĕç нормине 200 процент, Е. Чуракова 180 процент, Д. Давнова 174 процент, А. Васильев 165 процент тултарса пыраççĕ.

4-мĕш околотокри коллектив кăçал хĕле те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Чугунçула лайăх юсаса хĕле хатĕрленĕшĕн коллектив эксплоатацин технически паспортне пуринчен малтан илнĕ.

Хальхи вăхăтра коллектив, мастор Чураков юлташ ертсе пынипе, рельсăсене тăрăшшĕпех улăштарса лартас тĕлĕшпе ĕçлет. Çак ĕçре Рапин юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Бригада кулленхи задание 135 процент тултарать. Чугунçула пĕрмаях юсавлă тытса тăнăшăн, ремонт бригадисене аван ертсе пынăшăн çулйĕр мастерне Чураков юлташа Хусан чугунçулĕн управленийĕ 800 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Коллектив кăçал юр хывса лартасмалли щитсене те срокра хатĕрлесе, кирлĕ вырăнсене лартса тухнă. Ку ĕçре коллектива Красноармейски районри «Красная Чувашия», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем тата «Труд», «12 лет Октября» колхозсен членĕсем пысăк пулăшу панă. Вĕсем çапăсем çыхса 275 щит, щитсене лартмалли 2 пин юпа хатĕрлесе панă.

Халĕ ĕнтĕ çав щитсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартмалла. Çак ĕçе Красноармейски районри 15 колхозăн, Шăхасан районĕнчи 5 колхозăн туса тăмалла. Анчах колхозсем ăна тума халĕ те тытăнман-ха. Нумай колхозсем хăйсен договорĕсене пурнăçламаççĕ. Сăмахран, «Родина», «Победа» колхозсем щитсене улăштарма çынсем ямаççĕ. Çавнашкалах Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник», «Борец», Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем те хăйсене çирĕплетсе панă километрсем çинче ĕçлеме тытăнман.

Чугунçула колхозсен пысăк пулăшу парас пулать. Тумалли ĕçсене срокра пурнăçласси çинчен манма юрамасть.

С. ШАДИН.
ТРАК РАЗЪЕЗЧĔ.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕ ВЛКСМ-ăн Мари республикинчи организацине комсомолецсемпе çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕçе лайăхрах организацилеме социализмлă ăмăртăва чĕнсе, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле республикăра 50.000 йĕлтĕрçĕ-боецсем, йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсем 1.500 çын тата комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен вăйĕпе 6.000 мăшăр йĕлтĕр хатĕрлеме обязательство илнĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсене Мари республикинчи комсомолецсене социализмлă ăмăртăва чĕннĕ условисене ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен бюровĕсенче сӳтсе-явма, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илме тата колхозсенчи, предприятисенчи, учрежденисемпе шкулсенчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем хушшинче вăл обязательствăсене пурнăçлассишĕн, йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлес ĕçре лайăх результатсем тăвассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушнă.

Орденлă Чăваш республикинчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен тасa тивĕçĕ вăл—çак ăмăртура малти вырăна тухасси, Хĕрлĕ Çара лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ йĕлтĕрçĕ-боецсем ытларах та ытларах парса тăрасси пулать.

Фронтовиксен çырăвĕ çине ответлесе

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Çак кунсенче комбинатри комсомол комитечĕ фронтран çыру илчĕ. Ăна фронта каяччен комбинатра ĕçленĕ Василий Прусаковăн юлташĕсем çырнă.

«Эпир сире çакна пĕлтерес терĕмĕр, — теççĕ фронтовиксем, — эпир кунта нимĕç оккупанчĕсене хирĕç вăйя шеллемесĕр çапăçатпăр. Ку тарансччен сирĕн земляк Прусаков юлташ 31 фашиста, Ковалевпа Руденко юлташсем 40-шер фашиста леш тĕнчене ăсатрĕç. Малашне эпир ку шута ӳстерсех пыратпăр».

Çак çыру комбинатри çамрăксен производствăри активлăхне нумай ӳстерчĕ. Вĕсем фронтовиксен çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса татах вăйлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Комсомолецсем Красношековпа Леонтьев юлташсем куллен 2—3-шер норма тултараççĕ, уйрăм заказсене пурнăçланă чухне вĕсем 3—4 кун хушши цехран тухмасăр ĕçлеççĕ.

Фронтовиксен чĕнĕвĕ çине ответлесе комсомолкăсем О. Иванова, Губанихина юлташсем заданисене 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме пулчĕç. Çак кунсенче вĕсем иккĕшĕ те рекордла çитĕнӳ турĕç. Иванова юлташ 8 сехет хушшинче тăватă кун çурăра тумалли ĕçе пурнăçларĕ. Халиччен нормăна 150—180 процент çеç тултарнă О. Митрофанов та пĕр заказа пурнăçланă чухне сменăри нормăна 1,5 сехет хушшинчех тултарчĕ.

Х. ЛИСИН.

Ют çĕршывсенче

ТРИПОЛИТАНИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Алжирти радио юлашки хут пĕлтернĕ тăрăх, Роммелĕн войскисем Мисуретăран хĕвеланăçнерехри вырăна пырса çитнĕ; Мисуретăна хӳтĕлеме италянецсен чылай вăйлă гарнизонне хушнă.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтэд пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх (вăл корреспондент Англин 8-мĕш çарĕпе пĕрле пырать), англичансен разведкисем çакăн çинчен калаççĕ: Роммелĕн хыçалта пыракан чăсĕсем Вади-Земсем тата Вади-Софедджин юханшывĕсем патĕнче. Сиртран 90 тата 120 милярa хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ. Тĕнĕл держависен каялла чакакан войскисем аэродромсене сухалаcа хăвараççĕ, тарасасене сирпĕнтерсе е отрава ярса хăвараççĕ, çулсене пăсса хураççĕ.

ДАКАРА АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ПЫНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Дакартан пĕлтернĕ тăрăх, унта Америка войскисем пынă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи авиацийĕ ĕнер каçхине Сен-Малори доксене атакăланă. Истребительсен отрячĕсем Бретаньпе Нормандии çинче вĕçнĕ. Çав кунах Англи бомбардировщикĕсемпе истребителĕсен отрячĕсем Гельдерери (Голландия) объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

8 декабря с/г. с базы Чебоксарской Конторы Главзаготскотцентра убежала корова. Примета: ухо пробито пломбиром.

Знающих о местонахождении ее просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Ярморочная площадь, дом №5.
КОНТОРА ГЛАВЗАГОТСКОТЦЕНТРА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1150 Типография № 1 Управления полиграф [illegible] СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п